27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ИЮЛЬ 1 ШАМАТКУН 129(6624) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Утта лайăх çулса пуçтарар

Нумаях пулмасть Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Выльăх-чĕрлĕхе хĕл касăрмашкăн апат тата суртйĕр хатĕрлесе хурасси çинчен» ятарласа решени йышăнчĕ. Утта выльăх апачĕ хатĕрлесси вăл государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес планĕн [illegible] пайĕ пулса тăнине, Хĕрлĕ Çара, халăха выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем пĕр чăрмавсăр парса тăрасси [illegible] утă çителĕклĕ парса тăрасси выльăх апачĕ хатĕрлессипе [illegible] пайĕ, утă çулса пухас тĕлĕшпе конкретлă задачăсем лартнă.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ XIX-мĕш пленумĕ те «Колхозсенчи общественнăй выльăх-чĕрлĕх йышне сыхласа хăварасси тата ăна малалла ӳстерсе пырасси çинчен» [illegible] решени йышăнчĕ.

Çак питех те паха решенисем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре анăçлăн малалла яма пулăшаççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтăва выльăхсем валли паха апат çителĕклĕ хатĕрлени татса парать. Иртнĕ çул Кувакино, Çĕмĕрле, Пăрачкав, Улатăр, Шăмăршă тата хăшпĕр ытти районсем утă çулса пухас тата ăна сыхласа усрас ĕçсене кирлĕ пек организацилемен пирки, выльăхсене хĕл касарма çителĕклĕ апат хатĕрлеймерĕç. Çак сăлтавсене пула чылай колхозсенче выльăхсем ытла та начарланчĕç, вилнисем те чылай пулчĕç.

Элĕк районĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе малта пыракан районсенчен пĕри чĕ, анчах та кунта выльăх апачĕ хатĕрлес, унпа тирпейлĕ усă курас ĕç çине çиелтен пăхма пуçларĕç. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра, «Комбайн», «Тракер», «Красная Заря», «Самолет» тата ытти чылай колхозсенче те выльăх апатне çителĕксĕр хатĕрленĕ пулин те, ăна тиртерсĕр тыткаланă, вăрласа нумай пĕтернĕ. Çавна пула выльăх апачĕ çитмен, выльăхсем нумай вилнĕ. Çитĕнӳсемпе мăнкăмăлланса лăпланнă район руководителĕсем çав çитменлĕхсене курман, ахальтен мар ĕнтĕ Элĕк районĕ государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне туптарас ĕçре кая тăрса юлчĕ.

Пирĕн республикăра выльăхсем валли апат хатĕрлеме пур условисем те çителĕклĕ. Улăхсемпе вăрмансенчи уçланкăсем нумай, акнă курăксем те пур. Выльăх апачĕн çирĕп базине тума пултаратпăр, тумалла та. Выльăх апачĕ шутĕнче утă пысăк вырăн йышăнать. Анчах утă хатĕрлес ĕçе пĕлсе те тĕрĕс организацилемелле.

Утта кĕске срокра пухса кĕртмелле, унăн пахалăхне ӳстермелле!—акă пирĕн уйрăмах мĕне асра тытас пулать. Утă çулса пухасси—ялхуçалăх çулĕн, çавăн пекех выльăх ĕрчетес ĕçĕн чи ответлă тапхăрĕсенчен пĕри пулса тăрать. Пирĕн республикăри колхозсен кăçал улăх ути 60.000 гектар ытла, иртнĕ çулсенче акнă курăксем 38.000 гектар тата кăçал акнă курăксем 23.899 гектар çулса илмелле. Çак цифрăсем вĕсем кайсемех умра пысăк ĕç тăни çинчен калаççĕ. Утă çулнă çĕрте тăкаксене хирĕç кĕрешесси пысăк вырăн йышăнать. Иртнĕ çул утă çулас ĕçе кирлĕ пек организацилеменнине пула пĕр Çĕмĕрле районĕнчи колхозсем кăна 500 гектар утта çулмасăр хăварнă, Йĕпреç районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозра çулнă утта 100 тонна ытла çĕртсе янă тата ытти те. Шăмăршă районĕнчи колхозсем вăрманти уçланкăсенчен çĕршер тонна утă çулса илме пултарнă. Çапла вара выльăх апачĕн базинчен чи паха та сĕткенлĕ утă çĕршер тонна тухса ӳкнĕ. Иртнĕ çулхи йăнăшсене кăçал тума юрамасть.

Нумай районсенчен утă çулма тухни çинчен пĕлтереççĕ. Республикăри колхозсем июнĕн 25-мĕшĕ тĕлне улăх утине 19,2 процент çулнă. Çавăн тĕлне çулас ĕç Чкаловски, Канаш, Йĕпреç тата ытти районсенче [illegible] пырать. Анчах та Куславкка, Кувакино, Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски, Шупашкар, Шăмăршă районĕсем утă çулас ĕçе тытăнман-ха. [illegible]

Утă çулас ĕçре [illegible] кĕске срока тумалли ĕç. ВКП(б) Обкомĕн [illegible] колхозсенчи [illegible] ССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн 1942 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕпе тărах, хуласенчи тата ялсенчи ĕçе юрăхлă пур çынсене те утă çулас ĕçе мобилизацилеме пултараççĕ. Утă çулас ĕç ăнăçлăрах пулса пытăр тесен, кашни колхозрах утă çулакансене пĕрле апатлантарассине йĕркелемелле, çакă вăл ĕçе нумай хăвартлатма пулăшать.

Утă çулса пухас ĕçре кашнине уйрăм сдельщина тăрăх тата ĕçшĕн хушса тӳлес йĕркепе тӳлемелле. Çав йĕркепе утă çулса пухакан колхозниксене, ĕçкунĕсем тăрăх тӳленисĕр пуçне, çулса капана хывнă уттăн вуннăмĕш пайне памалла, лаша сенокосилкисемпе ĕçлекен колхозниксене тырă вырма тухиччен 40 гектартан ирттерсе çулнă кашни гектар пуçне 20 килограмм утă памалла.

Бригадăри е звенори колхозниксене памалли утта вĕсене утă çулса пухнă чухне тунă ĕçкунĕсен хисепĕ тăрăх валеçсе памалла.

Утă çулса пухас ĕçре сенокосилкăсемпе, лашапа ĕçлемелли креплесемпе туллин усă курмалла. Анчах та çарансемпе акнă курăксене ытларах çавасемпе çулса пухма тивет. Республикăри колхозсене сутма халĕхе çава çителĕксĕр кӳрсе килнĕ, çавăнпа та колхозниксен хуçалăхĕсенчи тата колхозсенчи мĕнпур пек çавасене туптаса хатĕрлемелле.

Республикăри хăшпĕр организацисен çаврăнăçусăрлăхĕ çак ĕçре чăрмантарма пултарнине асăрхаттармалла. Чăвашсоюз 1000 çава, 100.000 яхăн лапатка кӳрсе килнĕ, анчах та вĕсем çак вăхăта çитсе те Шупашкарпа Сĕнтĕрвăрри хулисенче выртаççĕ. Колхозсем лапаткасемпе çавасем шыраса вăхăт ирттереççĕ, утă çулма тухас ĕçе тăсса пыраççĕ. Çавасемпе лапаткасене халех, пĕр кун чарăнса тăмасăр, колхозсене ăсатмалла.

Республикăри чылай колхозсем утă çулас ĕçе массăллăн пуçĕнчĕç. Партипе совет тата комсомол организацийĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ «Выльăх-чĕрлĕхе хĕл касăрмашкăн апат тата суртйĕр хатĕрлесе хурасси çинчен» йышăннă постановление, ВКП(б) Обкомĕн XIX пленумĕ «Колхозсенче общественнăй выльăх-чĕрлĕх йышне сыхласа хăварасси тата ăна малалла ӳстерсе пырасси çинчен» йышăннă постановление кашни колхозникпе колхозницăна тĕплĕн ăнлантарса памалла, çак ĕçе колхозсенчи выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетес ĕçпе çыхăнтарса конкретлă мероприятисем палăртса хумалла, çав мероприятисене пурнăçлама мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилемелле.

Колхозниксемпе колхозницăсен фронтпа çĕршыва памалăх та, колхозсенчи выльăхсене тăрантармалăх та, ĕçкунĕсем тăрăх валеçмелĕх те утă çителĕклĕ пухса илессишĕн фронтри пек кĕрешмелле, çак ответлă та хĕрӳ ĕçре социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла.

ВЛКСМ Центральный Комитетĕнче

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомолпа пионер организацийĕсен уйра ӳсекен эмел курăкĕсем пухас тĕлĕшпе пыракан социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура мала тухнă организацисене ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотисене тата укçа парса наградăланă. Наградăланисем хушшинче пирĕн республикăри комсомол тата пионер организацийĕсем те пур.

Комсомолăн Çĕрпӳ районĕнчи «Молодая сила» колхозри пуçламĕш организацине (секретарĕ Яковлева юлташ) ВЛКСМ Центральный Комитечĕн грамотине тата 3.000 тенкĕ укçа, çамрăк натуралистсемпе техниксен республикăри станцинчи çамрăк натуралистсен кружокне ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотине тата 1.500 тенкĕ укçа парса наградăланă.

Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулти 6-мĕш класра вĕренекен Анатолий Ляшкова тата Шупашкарти 7 çул вĕренмелли чăваш шкулĕнче 4-мĕш класра вĕренекен Иван Смирнова «СССР Апатçимĕç промышленноçĕн тата сутуилу Халăх Комиссариачĕсен социализмлă ăмăртăвĕн отличникĕ» ятлă значокпа наградăлама тата 500 тенкĕ укçан премилеме тăратнă.

Комсомолăн Çĕрпӳ районĕнчи «Молодая сила» колхозри пуçламĕш организацин секретарьне Г. Яковлева юлташа ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотине тата хаклă парнесем парса наградăланă.

Физкультурниксен Пĕтĕм Союзри кунне хатĕрлеме пуçланă

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт ĕçĕсен Пĕтĕм Союзри Комитечĕ физкультурниксен июлĕн 16-мĕшĕнче палăртакан Пĕтĕм Союзри кунне ирттересси çинчен вырăнсене кăтартусем панă.

Çав кун Мускавра, Ленинградра, Киевра, Тбилисире, Бакура, Ташкентра тата ытти хуласенче те массăллă спорт праçникĕсем пулса иртеççĕ. Спортăн нациллĕ тĕсĕсем енĕпе ăмăртусем, фабрикăсемпе заводсенчи тата колхозсемпе совхозсенчи спартакиадăсем пулмалла.

Нумай эвакогоспитальсенче сывалакан боецсемпе офицерсен спорт ăмăртăвĕсем пулса иртеççĕ.

Физкультурниксен кунне хатĕрленесси халĕ ĕнтĕ пĕтĕм çĕршывра пуçланнă.

(ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮНĔН 29-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

КАРЕЛИ фрончĕн çарĕсем, тăшмана хыçалтан çавăрса илмелли маневр туса тата ОНЕГА кӳллин хĕвеланăç хĕррине десант антарса, Карело-Финн ССР-ĕн столицине ПЕТРОЗАВОДСК хулине нимĕçпе финн захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă, КОНДОПОГА хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çапла вара Кировски (Мурманск) чугун çула пĕтĕм тăршшĕпех тăшмантан тасатнă. Наступленипе МЕДВЕЖЬЕГОРСК хулинчен хĕвеланăçнелле тата кăнтăрнелле вăйлатса пырса, фронт çарĕсем ОНЕГА кӳллипе ЛАДОГА кӳлли хушшинче ЕВГОРА, 2-МĔШ КУМСА, МЯНДУ-СЕЛЬГА, ТАЛАЯ ЛАМБА, ВЕРХНЯЯ ДЕРЕВЯННАЯ, НИЖНЯЯ ДЕРЕВЯННАЯ, АФАНАСЬЕВА ГОРА, ПУСНУ-СЕЛЬГА, ЧИМОЙЛА, КИМУ-СЕЛЬГА ятлă ялсене туртса илнĕ.

ПОЛОЦК хули енче пирĕн çарсем наступлени туса пыраççĕ, Витебск облаçĕнчи район центрне УШАЧИ хулипе ВЕТРИНО ялне туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ЛЬСАЯ, ВАЛЮШИНА, ОСТРОВЛЯНЕ, 1-МĔШ ТУРЖЕЦ, 2-МĔШ ТУРЖЕЦ, ВОРОНЕЧ, ОРЕХОВО, КУБЛИЧИ ятлă пысăк ялсем тата ВЕТРИНО чугун çул станцийĕ. Пирĕн çарсем ПОЛОЦК хулипе МОЛОДЕЧНО хули хушшинчи чугун çула татнă.

МИНСК хули енче пирĕн çарсем, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, БОРИСОВ хулинчен çурçĕртерехре 60 километр сарлакĕш участокра БЕРЕЗИНА шывĕ патне пырса тухнă, халăх пурăнакан 200 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра—РОЖНО, ДОМЖЕРИЦЫ, ПЕРЕХОДЦЫ, БАРАНЫ, КРАЦЕВИЧИ, ХОЛХОЛЕЦ, НИЖИНО-СЛОБОДА, БЫТЧА, ЖИТЬКОВО, МЛЕХОВО, МУЖАНКА ятлă пысăк ялсем.

МОГИЛЕВ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, каялла чакакан тăшмана хăваласа пырса, 35 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 500 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Могилев облаçĕнчи район центрĕ БЕЛЫНИЧИ хули, ТЕТЕРИН, ГОЛОВЧИН, ОЛЕШКОВИЧИ, ОСОВЕЦ, КАЛИНОВКА, ТЕХТИН, БОЛЬШИЕ БЕЛЕВИЧИ, КОЛИЧЕНКО, ЗОЛОТВА, ГОРОДЕЦ, ДОЛГОЕ ятлă пысăк ялсем тата ВЕНДРИЖ, СЕМУКОВИЧИ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Пирĕн çарсем чылай участоксенче ДРУТЬ шывĕ урлă каçса кайнă.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем июнĕн 29-мĕшĕнче БОБРУЙСК хулипе пысăк чугун çул станцине штурмласа тытса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — СВИСЛОЧЬ, ОКТЯБРЬ, ЯСЕНЬ, ДАРАГАНОВО, МЕЗОВИЧИ, КРИНКА, СОЛОН, МАКАРИЧИ, ГОСТИНО, ЗЕЛЕНЬКИ, ЗАБОЛОТЬЕ ятлă пысăк ялсем тата ЯСЕНЬ, ТАТАРКА, ДЕРЕВЦЫ, ДАРАГАНОВО чугун çул станцийĕсем.

Пирĕн çарсем нимĕçсен БОБРУЙСК хули районĕнче çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкнă чухне пирĕн çарсем 16.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, 18.000 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусем пулман.

Июнĕн 28-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 278 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 71 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ БАРАНОВИЧИ, ЛУНИНЕЦ, МИНСК ТАТА ПОЛОЦК ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔСЕНЕ ТАПĂННИ

Июнĕн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Барановичи, Лунинец, Минск тата Полоцк чугун çул узелĕсене йышлăн вĕçсе кайса тапăннă.

Тапăну вăхăтĕнче Барановичи чугун çул узелĕнче тăшманăн çарсемпе çар техники тиенĕ эшелонсем нумай пулнă. Бомбăсем пăрахнине пула, узел территорийĕнче 15 тĕлте пушар тухнă. Летчиксем çав эшелонсем тата çар склачĕсем çуннине курнă. Лунинец чугун çул узелĕнче 3 эшелона вут хыпса илнĕ.

Пирĕн авиаци уйрăмах Минск чугун çул узелне вăйлăн тапăннă. Çав узел территорийĕн чылай пысăк пайне пушар ярса илнĕ. Эшелонсем тата çар склачĕсем çуннă. Полоцк чугун çул узелĕнче бомбăсем пăрахнине пула 6 тĕлте пушар тухнă, çав пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

☆ ☆ ☆

Карели фрончĕн çарĕсем ăнăçлă наступление вăйлатса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, чугун çул тăрăх кăнтăралла куçса пырса, Кондопога хулине туртса илнĕ. Пирĕн Онега кӳлли хĕррипе наступлени туса пыракан ытти чаçĕсем тăшмана кăнтăр енчен пырса çапнă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Онега кӳлли хĕррине Петрозаводск хули сывăхĕнче Онега çинчи çар флотилийĕн десантне антарнă. Çав тери хăвăрт наступлени туса пырса, совет çарĕсем Карело-Финн ССР-ĕн столицине Петрозаводск хулине туртса илнĕ. Тăшмана пысăк çухатусем кӳнĕ. Пĕр участокра кăна 3.000 финн салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 32 тупă, хĕçпăшалсен, боеприпассен тата апат-çимĕçĕн 79 складне тытса илнĕ. Совет боецĕсем Петрозаводск хулинчи финн захватчикĕсен концентрациллĕ лагерĕсенче асапланса пурăннă 30.000 мирлĕ çынна ирĕке кăларнă.

* * *

Полоцк хули енче тăшман, вăрманлă-шурлăхлă, йышлă кӳлĕллĕ-юханшывлă вырăнпа усă курса, хытă хирĕç тăнă. Ушача шывĕ патĕнчи позицире хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Нимĕçсем унта малтанах оборона тăрăхĕ туса хатĕрленĕ. Çав участокра вĕсем совет çарĕсем малалла куçнине чарса лартма хăтланнă. Пĕр соединени чаçĕсем тăшмана аркатса тăкнă та грунт çулĕсен узелĕ тата нимĕçсен опорнăй пункчĕ пулса тăракан Ушачи ялне туртса илнĕ. Пирĕн çăмăллăн куçса çӳрекен ушкăнсем шыв урлă каçнă та çав тери хăвăрт малалла кайнă. Полоцк хулипе Молодечно хули хушшинчи чугун çула татнă, Витебск облаçĕнчи Ветрино район центрне туртса илнĕ.

* * *

Минск хули енче пирĕн çарсем пĕр йĕркесĕр каялла чакакан тăшмана малалла хăваласа пыраççĕ, хушăри позицисенче чарăнса çирĕпленме май памаççĕ. Совет танкисчĕсемпе кавалерисчĕсем Минск шоссе çулĕ çинче нимĕçсен пысăк автоколоннине хăваласа çитсе аркатса тăкнă. Çав çул тăмисе вунă километр тăршшĕнче çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ тупăсемпе, автомашинăсемпе тата гитлеровецсен виллисемпе тулса ларнă. Тăшманăн çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 2.000 автомашинине ытла тытса илнĕ.

* * *

Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсем, çав тери хăвăрт атакăласа, Бобруйск хулине виçĕ енчен вăркăнса кĕрсе кайнă. Урамсенче пулса иртнĕ хаяр çапăçусем хыççăн хулана фашистла нимĕç захватчикĕсенчен тасатнă. Бобруйск хули районĕнче çавăрса илнĕ нимĕç çарĕсем, «хуран» тухса тарма хăтланса, юлашки чун хавалĕпе контратакăсем тунă, анчах та вĕсем çапăçни усăллă пулман. Совет чаçĕсем пыра-пыра çапнипе тăшман каялла чакса пынă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен темиçе пин салтакĕпе офицерĕн вилли выртса юлнă. Паян пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. 18.000 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр флочĕн авиацийĕ Çурçĕр Норвегири Киркенес портне пырса çапнă. Бомбăсем тӳрех пырса тивнипе тăшманăн пĕтĕмĕшпе 20.000 тонна таякан 3 транспорчĕ шыва путнă, унсăр пуçне тата тăшманăн 3 транспортне самаях вăйлă сиенленĕ. Порт территорийĕнче вăйлă пушарсем тухнă, пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă. Пирĕн самолетсен ытти ушкăнĕсем тăшманăн Петсамо портне пыракан судниссене атакăланă. 2 транспорта вут хыпса илнĕ, вара вĕсенчен пĕри часах сирпĕнсе кайнă та шыва путнă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 11 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Пинск облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ пĕр уйăх хушшинче тăшманăн 32 эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 26 паровоз тата 150 вагонпа платформа ытла çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Фашистла нимĕç захватчикĕсемпе çапăçса, совет патриочĕсем 640 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 200 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла амантнă.

П. И. Батовпа А. В. Горбатова çар званийĕ—генерал-полковник ятне парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

Павел Иванович Батова

Александр Васильевич Горбатова

СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулхи майăн 7-мĕшĕнче йышăннă Указĕ тăрăх тунă çар званийĕ—генерал-полковник ятне парас.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

ССР Союзĕн Совнарком ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи июнĕн 29-мĕшĕ.

Совет Союзĕн Маршалĕ К. К. РОКОССОВСКИЙ

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Арми генералне К. К. Рокоссовские çар званийĕ—Совет Союзĕн Маршалĕ ятне парасси çинчен

Арми генералне Константин Константинович Рокоссовские çар званийĕ — Совет Союзĕн Маршалĕ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи июнĕн 29-мĕшĕ.

Кăçалхи июнĕн 23-мĕшĕпе 27-мĕшĕ хушшинче Белоруссири 3-мĕш фронт çарĕсемпе Балтика тăрăхĕнчи 1-мĕш фронт çарĕсем наступлени тунă вăхăтра нимĕçсем тӳснĕ çухатусем тата пирĕн çарсем тытса илнĕ трофейăсем

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, арми генералĕ ЧЕРНЯХОВСКИЙ командир пулса ертсе пынипе, кăçалхи июнĕн 23-мĕшĕпе 27-мĕшĕ хушшинчи наступлениллĕ çапăçусенче тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çакăн пек çухатусем тӳстернĕ:

ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 126, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 796, минометсем—290, пулеметсем—2.852, автомашинăсем — 1.840. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 32.000 вилли ытла выртса юлнă.

Çав вăхăт хушшинчех БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: танксем — 36, хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—33, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—652, минометсем—514, пулеметсем—1.774, винтовкăсемпе автоматсем—13.380, радиостанцисем—163, автомашинăсем—3.300, тягачсем—25, паровозсем—32, вагонсем—1.540, лашасем — 2.266, боеприпас, хĕçпăшал, снаряжени тата апат-çимĕç склачĕсем—225.

Нимĕçсен 20.000 салтакне ытла тата 300 офицерне ытла ТЫТКĂНА ИЛНĔ. Вăл шутра — 53-мĕш армейски корпус командирĕ инфантери генералĕ ГОЛЛЬВИТЦЕР, 206-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ ХИТТЕР генерал-лейтенант тата 53-мĕш армейски корпус штабĕн начальникĕ ШМИДТ полковник.

Çапла ĕнтĕ, БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем 5 кун хушши наступлени тунă вăхăтра нимĕçсем хăйсен çар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсемпе çыннисене çакăн чухлĕ çухатнă: вилнисемпе тыткăна лекнисем—52.000 çын, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—195, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—1.448, минометсем—304, пулеметсем—4.626, автомашинăсем—5.140.

* * *

БАЛТИКА ТĂРĂХĔНЧИ 1-мĕш фронт çарĕсем, арми генералĕ БАГРАМЯН командир пулса ертсе пынипе, кăçалхи июнĕн 23-мĕшĕпе 27-мĕшĕ хушшинчи наступлениллĕ çапăçусенче тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çакăн пек çухатусем тӳстернĕ:

ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—269, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—252, минометсем—170, пулеметсем—1.009, автомашинăсем — 1.026. Пĕр вилнисене кăна шута илсен те, тăшманăн 20.000 салтакĕпе офицерĕ ытла пĕтнĕ.

Çав вăхăт хушшинчех БАЛТИКА ТĂРĂХĔНЧИ 1-мĕш фронт çарĕсем çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: танксем—31, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—374, минометсем—156, пулеметсем—1.093, винтовкăсемпе автоматсем—10.565, танксене пемелли пăшалсем—137, автомашинăсем—1.424, паровозсем—9, чугун çул вагонĕсемпе платформисем—30, лашасем—595, боеприпас, хĕçпăшал, снаряжени тата апат-çимĕç склачĕсем—225.

5.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла ТЫТКĂНА ИЛНĔ.

Çапла ĕнтĕ, БАЛТИКА ТĂРĂХĔНЧИ 1-мĕш фронт çарĕсем наступлени тунă вăхăтра нимĕçсем хăйсен çар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсемпе çыннисене çакăн чухлĕ çухатнă: вилнисемпе тыткăна лекнисем—25.000 çын, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—300, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—626, минометсем — 326, пулеметсем—2.102, автомашинăсем—2.450.

ИКĔ ФРОНТ — БЕЛОРУССИРИ 3-МĔШ ФРОНТПА БАЛТИКА ТĂРĂХĔНЧИ 1-МĔШ ФРОНТ — ПĔР-ПĔРИНПЕ ЛАЙĂХ КИЛĔШТЕРСЕ ТУНĂ НАСТУПЛЕНИЛЛĔ ÇАПĂÇУСЕНЧЕ (ВĔСЕМ ТĂШМАНĂН ВИТЕБСК ХУЛИ ПАТĔНЧИ ГРУППИРОВКИНЕ ÇАВĂРСА ИЛСЕ ПĔТЕРСЕ ТĂКНИПЕ ТАТА ВИТЕБСК ХУЛИНЕ ИРĔКЕ КĂЛАРНИПЕ ВĔÇЛЕННĔ) нимĕçсем хăйсен çар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсемпе çыннисене çакăн чухлĕ çухатнă: вилнисемпе тыткăна лекнисем — 77.000 çын, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 495, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—2.074, минометсем — 1.130, пулеметсем—5.728, автомашинăсем — 7.590.

СОВИНФОРМБЮРО.

РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

Малтанхи утта—государствăна

КАЛИНИНО. «Броневик» колхозăн 120 гектар утă çулмалла пулсан, паянхи куна 80 гектар ытла çулнă. Çак ĕçре уйрăмăнах парти членĕ Т. Петров юлташ ертсе пыракан 2-мĕш бригада аван тĕслĕхсем кăтартать. Бригадăри О. Куликова, Е. Петрова, М. Павлова колхозницăсем кулленхи ĕç нормисене 120-шер процент ытла тултараççĕ, утта паха та пĕр тăкаксăр çулаççĕ.

Кунта ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн колхоз активĕ çине тăрса кĕрешет. Колхоз председателĕ — коммунист М. Федоров тата пуçламĕш парторганизаци секретарĕ С. Воробьев юлташсем утă çулакансене уйрăм лаптăксем уйăра-уйăра панă, агитациллĕ-массăллă ĕçе лайăх йĕркеленĕ.

Колхоз июнĕн 25-мĕшĕнче малтанхи лайăх утта государствăна леçсе пачĕ.

Утă çулнипе пĕрлех уборкăна та хĕрÿллĕн хатĕрленеççĕ. Тимĕрçĕ С. Петров çурласене шăлларĕ, 3 жнейкăна юсарĕ. Халĕ крепленллĕ çавасем хатĕрлеççĕ. Молотилкăна та юсаççĕ.

Кунта жнейкăсене кÿлмелли 6 мăшăр лашапа уйрăм пăхаççĕ, мăнтăрлатма тăрăшаççĕ. Вĕсене пăхма И. Ивановăпа Н. Сапожникова комсомолка-конюхсене хушнă.

Б. ШОРНИКОВ.

Çĕртме тăваççĕ

ВĂРНАР. (Хамăр корр.). Юлашки вăхăтра пур колхозсем те çум çумлас, тислĕк тăкас тата çĕртме тăвас ĕçсене хăвăртлатрĕç.

Кĕçтемĕрти Крупская ячĕпе тăракан колхоз 170 гектар, Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз—140 гектар, Мăн Турманти Ленин ячĕпе тăракан колхоз—100 гектар çĕртме сухи турĕç. Çапла вара вĕсем ирхи çĕртме тумалли плана ăнăçлăн тултарчĕç.

Хирпуçĕнчи «Победа» колхоз членĕсем те ĕçе организованно туса пыраççĕ. Вĕсем çурхи тырăсене пĕр хутчен пĕтĕмпех çумласа тухрĕç, уя 5.600 лав тислĕк кăларчĕç, 130 гектар çĕртме сухи турĕç. Юнашарти «1-ое Мая» колхоз членĕсем те хирпуçсенчен юлмаççĕ. Вĕсем те кĕске вăхăтрах уя 4.700 лав тислĕк тăкрĕç, 113,5 гектар çĕртме турĕç, пĕтĕм тырпула çумкурăксенчен пĕр хутчен тасатса тухрĕç.

Малта пыракан колхозсем ытти ĕçсемпе пĕрлех уйри тырпулсене пустарса кĕртме те хатĕрленеççĕ. «Победа», «Самолет», Сталин ячĕпе тăракан колхозсенче çава-креплесем, çурласем кирлĕ чухлех хатĕрленĕ, ытти ялхуçалăх машинисене юсас ĕç те ăнăçлă пырать.

Х. ЛИСИН.

Тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ, июнĕн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). Кивĕ Тукайри «Сталь» колхоз (председателĕ В. Федоров юлташ) тырпулсене пухса кĕртме лайăх хатĕрленет. Жнейкăсемпе молотилкăсене юсаса пĕтернĕ, 18 урапана юсанă, 4 урапа çĕнĕрен илнĕ. 20 çава валли кĕрепле хатĕрленĕ, 8 склада дезинфекциленĕ. 150 михĕ тата шăналăксем хатĕрленĕ.

Колхоз тырпулсене пухса кĕртме план тунă. Çав план тăрăх кĕрхи тырăсене 8 кунра, çурхи тырăсене 12 кунра вырса пуçтармалла. Тырă вырма тухсан вйçĕ кунтан çапма тытăнмалла та государствăна срокчен тырă парса татмалла.

Тырă вырса пухнă чухне кам ăçта ĕçлемеллине пĕтĕмпех палăртса хунă, çавăн çинчен колхозниксем хăйсем пĕлсе пĕлеççĕ. Ĕç вăхăтĕнче колхозниксем валли — столовăй, ачасем валли—ясли пулать. Вĕсем валли кирлĕ апат-çимĕçсемпе япаласем хатĕрлеççĕ.

Колхоз çĕртме туса пĕтернĕ. Тырăсене çумкурăксенчен пĕтĕмпех тасатнă.

Колхоз выльăхсем валли апат хатĕрлес тĕлĕшпе те аван ĕçлет. Паянхи кун тĕлне 60 тонна силос хывнă, вĕлтренпе арăмути типĕтсе 1400 кĕлте хатĕрленĕ. Халĕ утă çулаççĕ.

Колхозра стахановецсен шучĕ ÿссех пырать. А. Табаков, Е. Васильева, Д. Романова, А. Губанов, А. Андреева, А. Бурцева юлташсем çуракине тухнăран вара хуть те мĕнле ĕçре те нормăна ытлашшипех тултарса ĕçлеççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ вĕсем 5 уйăх хушшинче 120—160-шар ĕçкунĕ тунă.

— Халĕ, фронтран савăнăçлă хыпарсем килсе тăнă чухне, ырми-канми ĕçлес килет. Колхозра лайăхрах ĕçлесе нимĕç вăрă-хурахĕсене пуçĕпех аркатса тăкма Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйран пулăшас пулать, — теççĕ колхозниксем.

С. РУМЯНЦЕВ.

ÇУЛЙĔР УЙĂХЛĂХĔ

Уйăхлăха активлăн хутшăнчĕç

СĔНТĔРВĂРРИ, июнĕн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри чылай колхозсем çулйĕр уйăхлăхне активлăн хутшăнчĕç. Ольтикасси ялсоветĕнчи «1-ое Мая», «Восток», «Заря» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем хăйсен участокĕсем çинче 100 метр тăршшĕ вĕтĕ чул, 90 кубометр хăйăр сарса тухрĕç. Ку ялсоветран çул юсанă çĕре кунсеренех 60—65 çын çуран, 15—18 лаша тухаççĕ.

Упакасси ялсоветĕнчи колхозсем те уйăхлăхри задание тултарассишĕн пикенсе ĕçлеççĕ. «Трактор», «Малалла», Ленин тата Горький ячĕсемпе тăракан колхозсем Çавал урлă каçмалли пысăк кĕпере паянхи ыранах туса пĕтереççĕ. Çулйĕр ĕçĕнче уйрăмăнах «Ударник» колхоз членĕсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Ф. ИЛЬИН.

Элĕксем тивĕçлипе ĕçлеме тытăнман-ха

ЭЛĔК, июнĕн 30-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Уйăхлăх пуçланнăранпа 10 кун иртрĕ. Анчах та Крымсарайка ялсовечĕ (председателĕ Николаев), Писĕп ялсовечĕ (председателĕ Васильева) тата ытти ялсоветсем те уйăхлăха хутшăнман-ха. Крымсарайка ялсоветĕнчи колхозсен Элĕкпе Советски хушшинчи тракт çине 50 кубометр хăйăр, 20 кубометр чул турттармалла. Вĕсем паянхи куна çитсе те ĕçе тытăнман. Партин 16-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Григорьев — «çулйĕрсене юсама вăхăт çук», тесе ларать. Çапла вара вĕсем хăйсен колхозĕ патне пыракан 10 километр тăршшĕ çула та юсама пултарайман. Çавăн пекех колхоз уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе те нимĕн те тумасть.

Çак районтан çулйĕр ĕçĕнче кунсерен 150 çын çуран, 30 çын лашапа ĕçлемелле пулсан, çуран 100 çын, лашапа 10 çын çеç ĕçлеççĕ. Уйăхлăх пуçланнăранпа 100 кубометр чул, 60 кубометр хăйăр турттарнă, строительствăра кирлĕ пулакан материалсем 12 кубометр хатĕрленĕ, 3 километр тăршшĕ çула утюгласа якатнă.

Политикăллă çутĕç ыйтăвĕпе пулса иртнĕ республикăри канашлу

Çак кунсенче Шупашкарта парти райкомĕсемпе хула комитечĕсенчи пропаганда отделĕсен заведующийĕсен, районсенчи тата хуласенчи çутĕç пайĕсен заведующийĕсен, ВЛКСМ райкомĕсемпе хула комитечĕсен секретарĕсен тата лайăх ĕçлекен вулав çурчĕсен заведующийĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу политикăллă çутĕç учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатас ыйтăва сÿтсе-яврĕ.

Республикăра политикăллă çутĕç мĕнле пыни çинчен ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ Иванов юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик пирĕн республикăра халĕ тыхри ĕççыннисене хастарлăн ĕçлеме, фронта пулăшассишĕн, вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи задачăсене пурне те ăнăçлăн пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме мобилизацилекен вулав çурчĕсемпе клубсем, культура çурчĕсем сахал мар пуррине палăртрĕ. Çав вăхăтрах политикăллă воспитани тата культурăллă-массăллă ĕçри пысăк ситменлĕхсене те пĕтермен-ха. Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ, районсенчи çутĕç пайĕсем, комсомол обкомĕпе райкомĕсем ку тарана çитсе те политикăллă çутĕç учрежденийĕсем çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмаççĕ, вĕсен ĕçне сителлĕксĕр ертсе пыраççĕ. Нумай районсенчи ялти актив, комсомолецсемпе учительсем вулав çурчĕсемпе клубсене тата библиотекăсене кирлĕ пек активлăн пулăшмаççĕ.

Иванов юлташ политикăллă çутĕç учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе партипе комсомол, совет организацийĕсем тата çутĕç органĕсем умĕнче тăракан практикăллă задачăсем çинчен тĕплĕн чарăнса тăрать. Халĕ ĕçлемен мĕнпур вулав çурчĕсене, колхозри клубсене, культура çурчĕсене пурне те августăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр ĕçлеттерме тытăнмалла. Кашни вулав çурчĕн уйрăм çурт пулмалла. Çутĕç учрежденийĕсенче культурăллă йĕрке тумалла, вĕсене кĕле хатĕрлемелле, вĕсем валли вутă, краççин тата ытти кирлĕ япаласене çителĕклĕ хатĕрлемелле. Вулав çурчĕсен, клубсен тата библиотекăсен заведующийĕсем пулса ĕçлеме лайăх пĕлекен, пултаруллă çынсене уйăрса лартмалла, вĕсене куллен пулăшса тăмалла. Ялти политикăллă çутĕç учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатас ыйту партипе комсомол райкомĕсен тата çутĕç органĕсен кулленхи ĕçĕ пулмалла.

Доклад тăрăх пренире тухса калакан юлташсем хăйсен ĕçĕсемпе паллаштарчĕç. Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри вулав çурчĕн заведующийĕ Якимов юлташ колхозниксем культурăна юратни çинчен каласа пачĕ. Вулав çурчĕн библиотекинчи кĕнекесене 115 çын вулать. Уйрăмăнах отечественнăй вăрçă çинчен, хамăр земляксем çинчен çырнă кĕнекесене нумай ыйтаççĕ.

— Пирĕн вулав çуртĕнче, — пĕлтерет Тăвай районĕнчи Тăрмăш вулав çурчĕн заведующийĕ Бенков юлташ, — кашни каçрен ялашсах халăх нумай пулать. Библиотекăра 3000 кĕнеке ытла, хаçатсем, журналсем пур. Çавăн пекех шахматсем, доминосем, музыка инструменчĕсем чылай. Вулав çурчĕ çумĕнче агротехника, çар ĕçне вĕренмелли, драма, хор кружокĕсем ĕçлеççĕ.

Октябрьски районри Нарат-Чакăнчи вулав çурчĕн заведующийĕ Матвеева юлташ вулав çурчĕ çуракине мĕнле хутшăнса ĕçлени çинчен калать. Колхозниксем хушшинче 24 агитатор ĕçленĕ. Вулав çурчĕ вĕсене хаçатсемпе ытти материалсене парса тăнă. Хисеп хăми тунă, унта стахановецсене çырса пынă.

Агитациллĕ-массăллă ĕçе лайăх йĕркелени çуракине лайăх пахалăхпа, ăнăçлăн ирттерме пулăшнă.

ВЛКСМ Тăвай райкомĕн секретарĕ Яковлева юлташ Чăваш писателĕсем умне ыйту лартать. Çамрăксем драма кружокĕсене активлăн хутшăнаççĕ. Анчах хальхи тапхăра тивĕçлĕ чăвашла çырнă пьесăсем пачах та çук темелле. Пире кĕнекесем сахал параççĕ. Районри вулав çурчĕсенче пурĕ те 10.000 кĕнеке кăна пур.

Çĕрпÿри культура çурчĕн ĕçĕсем çинчен унăн заведующийĕ Данпю юлташ каласа пачĕ.

ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ Михайлов юлташ комсомолецсемпе çамрăксене агитациллĕ-массăллă ĕçе тата культурăллă-çутĕçе активлăн хутшăнма чĕнчĕ.

Çутĕç Халăх Комиссарĕ Макаров юлташ хăйĕн сăмахĕнче районсенчи çутĕç пайĕсен заведующийĕсене ялти политикăллă çутĕç учрежденийĕсене ертсе пырас ĕç çине тимлĕрех çавăрăнса пăхма, вĕсен ĕçĕнчи ситменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерме сĕнчĕ.

Канашлу участникĕсем валли ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ Иванов юлташ «Совет Союзĕн Отечественнăй вăрçин вйçĕ çулталăкĕ» темăпа лекци вуласа пачĕ.

Растратăсемпе таварсене салатнине хирĕç татăклăн кĕрешмелле

Çак кунсенче Шупашкарта суту-илÿ организацийĕсемпе ОРС-сенче ĕçлекенсен, судпа прокуратура тата милици работникĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу республикăри суту-илÿ организацийĕсенче растратăсем тунипе, пурлăхпа таварсене салатнине хирĕç кĕрешмелли мероприятисем çинчен сÿтсе-яврĕ.

Канашлу Чăваш АССР Суту-илÿ Халăх Комиссарĕн заместителĕ Братчиков юлташ тунă доклада итлерĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче республикăри суту-илÿ работникĕсенчен чылайĕшĕсем халăх ыйтăвне тивĕçтерес тĕлĕшпе тÿрĕ кăмăлпа ĕçленине палăртрĕ. Анчах суту-илÿ организацийĕсене шанчăксăр çынсем те, вăрăсем те хĕсĕнсе кĕреççĕ. Вĕсем халăх пурлăхĕпе хăйсен интересĕсемшĕн усă курма хăтланаççĕ. Растратчиксене хирĕç, пурлăхпа таварсене салатнине хирĕç татăклăн кĕрешессине организацилемен. Çапла, кăçал пилĕк уйăх хушшинче кăна çĕршер пин тенкĕ растрата пулнă. Растратăсем уйрăмăнах Чăвашторг (директорĕ Швец), Чăвашсоюз (председателĕ Терентьев), Чăвашлеспродторг (управляющийĕ Николаев) системисенчи суту-илÿ организацийĕсенче нумай пулнă. Таварсене салатнисем, промышленность таварĕсемпе апат-çимĕç илмелли карточкăсемпе ултавлăн усă курнисем, таварсем илекенсене улталанисем те сахал мар пулнă.

Мĕншĕн-ха юлашки вăхăтра растратăсен хисепĕ ÿссе пырать? Сăлтавĕ—суту-илÿ организацийĕсем кадрсене суйласа илес ĕç çине ответсăр пăхнинче. Нумай чухне палламан çынсен аллине магазинсем, базăсем параççĕ. Çавăнпа усă курса вара, вăрăсем магазинсемпе базăсене çаратаççĕ. Хăшпĕр руководительсем тата суту-илÿ ĕçĕнче айăпа кĕнĕ çынсенех ĕçе илеççĕ. Вĕсем вара кăштах ĕçлесен татах преступлени тăваççĕ.

Суту-илÿ работникĕсем хушшинче воспитани ĕçне çителĕксĕр йĕркеленĕ.

Ревизи комиссийĕсем начар ĕçлеççĕ. Çапла, Октябрьски тата Çĕрпÿ районĕсенчи потребитель союзĕсен ревизи комиссийĕсем темиçе çул хушши ĕнтĕ ĕçлемеççĕ.

Растратăсемпе таварсене салатнине хирĕç кĕрешес ĕçе судпа прокуратура органĕсем те сÿрĕклетнĕ. Растратчиксемпе таварсем салатакансен ĕçĕсене вăхăтра тата кирлĕ пек пăхса тухмаççĕ. Милици органĕсем спекулянтсене хирĕç çителĕксĕр кĕрешеççĕ.

Канашлура Терентьев (Чăвашсоюз), Громов (Чăваш АССР прокуратури) юлташсем содокладсем туса пачĕç.

Пренире Шуйкин (Çĕрпÿ районĕн прокуратури), Плетьнев (Пăрачкаври халăх сучĕ), Федоров (Вăрнар райпотребсоюзĕ), Киргизов (Çĕмĕрле), Швец (Чăвашторг), Мурзин (Канаш прокуратури), Лещев (Йĕпреç райпотребсоюзĕ), Судаков (Чебторг), Лермонтов (Çĕмĕрле прокуратури) тата ытти юлташсем тухса каларĕç.

Канашлу растратăсемпе таварсене салатнине хирĕç кĕрешмелли мероприятисене палăртса хăварчĕ.

Канашлура ВКП(б) Обком секретарĕн суту-илÿ енĕпе ĕçлекен заместителĕ Кузьмин юлташ тата Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕсем Семеновпа Киреев юлташсем пулчĕç.

ИЖОРА ЗАВОЧĔН ПĔРРЕМĔШ МАРТЕННЕ ХУТА ЯНĂ

Июнĕн 27-мĕшĕнче Ленинград облаçĕнчи Ижора завочĕн пĕрремĕш мартенĕ ĕçлеме пуçланă. Июнĕн 26-мĕшĕнче кăнтăрла шихта (шăратмалли металсем) тултарнă, çĕрле вара пĕрремĕш хут металл шăратса кăларнă.

Вăл мартена хута яни çав чаплă завода юсаса ура çине тăратма пуçлани пулать. Çав завод вăл икĕ çул ытла пирĕн оборонăн малти хĕрринче тăнă. (ТАСС).

„Хĕрлĕ Çар тĕлĕнмелле хăватлăн наступлени туса пырать“

СОВЕТ ÇАРĔСЕН ÇАПАÇУРИ ÇИТЕНĔВĔСЕМ ÇИНЧЕН АНГЛИПЕ АМЕРИКА ПИЧЕТĔНЧЕ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, июнĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар çĕнтерÿллĕ наступлени туса пыни çинчен калакан хыпарсене пур хаçатсем те курăнмалли вырăнта пичетлесе кăлараççĕ.

«Дейли мейл» хаçат редакцирен çырнă статьяра — вырăссен фронтĕнче çав тери пысăк событисем пулса иртеççĕ, тесе çырать. Хĕрлĕ Çар тĕлĕнмелле хăватлăн наступлени туса пырать. Витебск, Жлобин, Орша, Могилев — вырăссене хĕвеланăçнелле, Германи çинелле кайма чарса тăнă. Халĕ ĕнтĕ çав бастионсем парăнчĕç. «Эпир ĕнтĕ халĕ часах юлашки нимĕçе те вырăс çĕрĕ çинчен кăларса ывăтассине кĕтме пултаратпăр, — тесе палăртать хаçат. — Çавăн хыççăн вара пирĕн союзниксем Сталинград патĕнчен Берлин патне çити тăсăлса выртакан вăрăм çулăн юлашки сыпăкĕ çине кĕрĕç. Хăвăртлăхсем ÿссех пырĕç. Нимĕçсене хупăрласа илнĕ ункăн пур енĕсенчен те союзниксем тăшмана вăйлăнрах та вăйлăнрах пыра-пыра çапĕç».

«Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат редакцирен çырнă статьяра çакна палăртать: Берлинри официальнăй çынсем Германишĕн татăклă сехет килсе çитнине тата ĕç часах вĕçленессине йышăнчĕç ĕнтĕ. Витебска çав тери хăвăрт пырса çапни нимĕçсен планне путлантарса лартрĕ. Халĕ ĕнтĕ советсен наступленийĕ питĕ хăвăрт пулса пынипе Германин Балтика районĕнчи çарĕсем хăрушлăха кĕрсе ÿкрĕç.

«Дейли экспресс» хаçат редакцирен çырнă статьяра: нимĕçсемшĕн тĕп хăрушлăх вăл — Хĕрлĕ Çар наступленийĕ пулса тăрать, тесе палăртать.

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем çинчен Америка пичечĕ çаплах анлăн çырать. Хаçатсем — союзниксен хăвачĕ пĕрехмай ÿссе пынă вăхăтра Германин вăйĕсем чакаççĕ, тесе палăртаççĕ.

«Вашингтон пост» хаçатăн обозревателĕ Новер çакна палăртать: Хĕрлĕ Çар малалла çав тери хăвăрт куçса пыни «Совет Союзĕ питех те нумай вăй пухса хатĕрленнине кăтартса парать. Çав вăя хирĕç Германин хăйĕн ытларах та ытларах чакса пыракан вăйне кăна тăратма пултарать. Çапла ĕнтĕ эпир, вăрçă пуçланнăранпа малтанхи хут, пĕтĕм тĕнчери иртнĕ вăрçăн юлашки уйăхĕсенче мĕн пулса иртнисем çĕнĕрен куç умне тухса тăнине куратпăр».

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июнĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июнĕн 28-мĕшĕнче каçхине панă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Çанталăк начарланнине тата тăшман вăйлăн хирĕç тăнине пăхмасăрах, союзниксен çарĕсем майĕпен Кан хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнелле куçса пыраççĕ. Тăшмана Фонтенэрен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ларакан Рорэ ятлă пунктран хĕссе кăларнă. Тăшман унта уйрăмах вăйлăн хирĕç тăнă. Гренвильпе Турвильти йывăр çапăçусем хыççăн пирĕн бронетанковăй чаçсемпе пехота Турвильтен кăнтăртарахра, 3 километра яхăн сарлакĕш участокра, Одон шывĕ урлă каçнă. Пирĕн çарсем Одонран кăнтăрарахра ларакан çÿллĕ вырăн патнелле малалла куçса пынă. Котантен çурутравĕ çинче, Шербуртан хĕвеланăçнерехре тата хĕвелтухăçнерехре, тăшманăн тĕреклетнĕ пункчĕсене пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă».

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян иркхине пичетлесе кăларнă коммюникере çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсен çĕнĕ чаçĕсем Одон шывĕ урлă каçнă та çывăхри укреплениcсене сарнă. Союзниксен танковăй чаçĕсем Одон шывĕнчен кăнтăртарахра тăшманпа хаяррăн çапăçаççĕ. Кан хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре йывăр çапăçусем пулса пынă, çав çапăçусене танксем хутшăннă.

Шербуртан хĕвелтухăçнерехри Мопертю аэродромĕн районĕнче тăшман хирĕç тăма пăрахнă. Тăшманăн Де-Ла-Аг сăмсахĕ çинчи тĕреклетнĕ пункчĕсене пĕтерсе тăкасси кăна юлать.

Кăнтăрла иртсен тата каçхине начар çанталăк тăни авиаци кĕрешĕвне татах чăрмантарнă».

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен Италири çарĕсем тăшмана çаплах хĕссе пыраççĕ, чылай участоксенче çĕнĕрен малалла куçнă. Хĕвеланăç çыранĕнче 5-мĕш армин чаçĕсем Кастаньето хулине йышăннă та малалла куçаççĕ. Çырантан шаларахри вырăнта шоссе çулĕсен узелне — Монтичано хулине йышăнса илнĕ. Кунтан хĕвелтухăçнерехре Франци çарĕсен малти соединенийĕсем, Тразимен кÿллинчен хĕвеланăç енче, Монтикьелло, Пьенца тата Монтальчино хыçĕнчи чылай пысăк территорие тытса илнĕ.

Енер йывăр бомбардировщиксен соединенийĕсем Болгарин Карловори аэродромне, Бухарест районĕнчи нефть тасатакан икĕ завода тата сортировка тăвакан станцие пыра-пыра тапăннă. Çавăн пекех тата тăшманăн Италири çар объекчĕсем, Югослави çыранĕсем патĕнчи суднăсем тата Югославири ытти тĕрлĕ объектсем çине бомбăсем пыра-пыра пăрахнă. Иртнĕ каçхине бомбардировщиксем Джурджу хулине (Румыни) вĕçсе пырса тапăннă.

ФИНЛЯНДИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ГИТЛЕРЛА ГЕРМАНИЕ ПУÇĔПЕХ СУТĂННĂ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çакă паллă пулса тăнă: çак кунсенче Финляндие пынă гитлерла ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Риббентроп, Финлянди правительствипе калаçнă чухне, Совет Союзне хирĕç малалла вăрçма Финляндие Германи енчен çар пулăшăвĕ пама пулнă. Нимĕçсем халĕ ĕнтĕ — хăйсем çав ыйтупа Финлянди правительствипе калаçса татăлтăмăр тесе — сăмах сараççĕ. Пĕлтернĕ тăрăх, Хельсинкине нимĕç çарĕсем пырса çитнĕ. Вĕсем унта нимĕçсемпе Финлянди правительстви калаçса татăлнă тăрăх пынă, çав çарсем Совет Союзĕпе Финлянди фронтне каймалла. Ку фактсем ĕнтĕ çакна уççăнах кăтартса пăраççĕ: Финлянди правительстви мир тăвасси çинчен калаçни, хăй гитлерла Германие пуçĕпех сутăнса, финн халăхне улталанине витмелли маска кăна пулса тăрать.

ФИНЛЯНДИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВĂРÇА МАЛАЛЛА ТĂСМА ЙЫШĂННĂ

ЛОНДОН, июнĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет:

«Германин Трансоцеан агентстви» паян иркхине Хельсинкирен — Финлянди правительстви çумĕнчи информаци бюровĕн представителĕ ютçĕршыв пичечĕн представителĕсене çакăн пек калани çинчен пĕлтернĕ: «Çак йывăр кунсенче Финлянди хăйĕн кивĕ прависемшĕн малалла кĕрешме шут тытрĕ. Çав сăлтавпа Финлянди Германирен пулăшу ыйтрĕ. Финлянди правительстви çав утăм мĕнпе пĕтессине пĕтĕмпех ăнланать, халĕ правительствăн çав решенине халăх ырлĕ тесе палăртма пулать те ĕнтĕ. Халĕ Германипе Финлянди хушшинчи союз — вăл пушă сăмах мар пулса тăнине кашни ăнланать».

ХЕЛЬСИНКИН ХАКЛĂ ХУЧĔСЕНЕ СТОКГОЛЬМА КУÇАРСА КАЙНĂ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Вестманландс Ленс Титнинг» хаçат çапла çырать: «Июнĕн 24-мĕшĕнче Хельсинки хулин управленийĕ хăйĕн хаклă хучĕсене Стокгольма куçарса кайнă. Çав хутсене Финлянди правительстви ячĕпе Швеци банкне хураççĕ. Çапла пĕлтереççĕ: нимĕçсемпе финсен ертсе пыракан фашисчĕсем финсен гражданĕсене нумайĕшне Германие куçарса кайма план хатĕрлесе хунă. Вырăссен наступленине пула хăрушă ларутăру сиксе тухсанах, финн гражданĕсене Германие куçарса кайма тытăнмалла».

Хусанти Суворовла çар училищине вĕренме илесси çинчен

Суворовла Çар училищисен задачи çакăн пек: вĕсен çар çыннисен тата Отечественнăй вăрçăри партизансен ачисене, çавăн пекех тата нимĕç оккупанчĕсем вĕлернĕ совет тата парти работникĕсен, рабочисемпе колхозниксен ачисене вăтам шкулсем панă чухлĕ пĕлÿ памалла, вĕсене Хĕрлĕ Çарта офицер пулса ĕçлеме вĕрентсе хатĕрлемелле.

Суворовла училищĕсен воспитанникĕсем, çав шутра приготовительнăй классенче вĕренекеннисем те, училищĕсем çумĕнчех пурăнаççĕ, вĕсем унта пĕтĕмпех государство шучĕпе пурăнаççĕ.

1944 çулта Хусанти Суворовла çар училищин çак класĕсене вĕренме илеççĕ:

кĕçĕн приготовительнăй класа — 8—9 çула çитнĕ ачасене, вĕренме пуçламаннисене е 1-мĕш класра вĕренсккеннисене;

аслă приготовительнăй класа — 9—10 çула çитнисене, 1-мĕш класран вĕренсе тухнисене е 2-мĕш класра вĕренсккеннисене;

1-мĕш класа — 10—11 çула çитнисене, 2-мĕш класран вĕренсе тухнисене;

2-мĕш класа — 11—12 çула çитнисене, 3-мĕш класран вĕренсе тухнисене;

3-мĕш класа — 12—13 çула çитнисене, 4-мĕш класран вĕренсе тухнисене;

4-мĕш класа — 13 çула çитнисене, 5-мĕш класран вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Ачасен ашшĕсен е амăшĕсен, е ачасене пăхакан ытти çынсен, çавăн пекех тата ача çурчĕсен директорĕсен, хăйсен ачине (воспитанникне) Хусанти Суворовла çар училищине вĕренме илме ыйтса, июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшне çитиччен Облаçри комиссин председателĕ ячĕпе заявлени ямалла. Заявленисене ЧАССР Наркомпросĕ урлă (гор. Чебоксары, Дом Советов, Наркомпрос ЧАССР) ямалла. Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла:

а) Хăçан, ăçта çуралнине кăтартакан свидетельство:

б) Миçе çул вĕренни çинчен (миçемĕш класран тата хăçан вĕренсе тухнине тата кашни предметпа мĕнле отметка илнине кăтартса) шкул панă справка;

в) Ача сывлăхĕ çинчен, ÿт-пĕвĕ çинчен тата хул кастарни çинчен терапевт, хирург, невропатолог, ушник тата глазник врачсем калана тăрăх врач комиссийĕ панă справка;

г) Ачан ашшĕ-амăшĕсем мĕн ĕçлесе пурăнни çинчен послужной списокран çырса илнĕ выписка е çавăн çинчен район (хула) совечĕ панă справка;

д) Ачасен Отечественнăй вăрçăра вилнĕ е инвалид пулса юлнă ашшĕ-амăшĕсем çинчен вĕсем хăçан, мĕнле условисенче вилнине е инвалид пулса юлнине кăтартса çырнă справка.

Çав документсенчен пĕри те пулин çук пулсан та, Комисси ачана Суворовла çар училищине вĕренме илесси çинчен татăклăн калама пултараймасть.

СУВОРОВЛА УЧИЛИЩЕСЕНЕ ВĔРЕНМЕ ÇЫНСЕМ СУЙЛАСА ЯРАКАН КОМИССИ.

Эпĕ часах мухтавлă воинсен ретне таврăнатăп

Хамăрăн тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçнă çĕрте эпĕ йывăр суранлантăм. Çакăн хыççăн манăн пурнăç пĕтĕмпех медицина работникĕсен аллине куçрĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çар воинĕсен кунçулĕшĕн вăй-хала шеллемесĕр тăрăшнине эпĕ халĕ куллен кун ытларах туйса пыратăп.

Канашри госпитальте çитнĕ хыççăн манă врач Ида Павловна Лундина юлташ пăхма пуçларĕ. Вăл хăйĕн пĕтĕм пĕлĕвне, пултарулăхне пирĕн пурнăçа упрас ĕçе парать, пирĕншĕн атте-анне пек тăрăшать. Халĕ ĕнтĕ эпĕ сывалса çитесси пирки пачах та иккĕленместĕп. Вăхăт нумай иртмĕ, эпĕ татах фашистла ирсĕрсене çĕмĕрме Хĕрлĕ Çар воинĕсен ретне тăрăп.

Эпир, госпитальте сывалакансем, Лундина врача тата госпиталĕн пĕтĕм коллективне чĕререн тав туса, малашнехи ĕçре ăнăçлăх сунатпăр.

Старшина М. БАЙТАСОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

П Ĕ Л Т Е Р Ÿ

Чăваш АССР Наркомземĕ ялхуçалăх техникумĕсемпе вăтам шкулĕсене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

№№	Шкул ячĕ	Адрес	Мĕнле отделенисем пур	Мĕнле квалификаци параççĕ	Миçе çул вĕренмелле
1.	Улатăрти зоотехникум	г. Алатырь, ул. Щорса, 3	1. Зоотехника отд. 3. Кайăк-кĕшĕк 2. Бухгалтерипе экономика	Зоотехник Кайăк-кĕшĕк зоотехникĕ Бухгалтер-инструктор	3 çул 3 „ 3 „
2.	Вăрнарти зооветтехникум	ст. Вурнары, М-каз. ж. д.	1. Зоотехника 3. Ветеринари	Зоотехник Ветеринари фельдшерĕ	3 çул 3 „
3.	Çĕрпÿри ялхуçалăх техникумĕ	г. Цивильск, пл. К. Маркса	1. Уйхир отд. 2. Ялхуçалăх механизацийĕ	Уйхир агрономĕ Ялхуçалăх машинисемпе тракторсен механикĕсем	3 çул 3 „
4.	Сĕнтĕрвăрринчи çĕрйĕркелÿпе гидромелиораци техникумĕ	г. Марпосад	1. Çĕрйĕркелÿ 2 Гидромелиораци	Çĕрйĕркелекен Гидротехник	3 çул 3 „
5.	Етĕрнери ялхуçалăх техникумĕ	г. Ядрин	Пахча-çимĕç	Пахча-çимĕç агрономĕ	3 çул
6.	Патăрьелĕнчи ялхуçалăх вăтам шкулĕ	с. Батырево, Чкаловского р-на	Уйхир	Колхоз агрономĕсемпе агротехниксем	2 çул
7.	Вăрнарти ялхуçалăх вăтам шкулĕ	пос. Вурнары	Уйхир	Çавах	2 çул

Ялхуçалăх техникумĕсемпе вăтам шкулĕсенче вĕренÿ кабинечĕсем, лабораторисем, вĕренÿ хуçалăхĕсем, йÿнĕ хакпа апат çитерекен столовăйĕсем, общежитисем пур, общежитисенче выртса тăмалли вырăнсем пур.

Кĕркуннерен пуçласа техникумсемпе ялхуçалăх шкулĕсем хăйсен 1941 çулччонхи çурчĕсенче вĕренме тытăнаççĕ.

Ялхуçалăх техникумĕсемпе вăтам шкулĕсенче вĕренекенсене стипенди параççĕ, столовăйра рабочисен нормипе апатлантараççĕ, общежитисене вырнаçтараççĕ, выртса тăмалли вырăнсем параççĕ.

Ялхуçалăх техникумĕсемпе вăтам шкулĕсене апçынсемпе хĕрачасене — вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ.

Туллимар вăтам шкултан е вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен «пятерка» тата «четверка» паллăсемпе вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ. Ыттисен испытани тытмалла пулать.

Вĕренме кĕрес текенсен малта кăтартнă адрессемпе заявленисем памалла, заявленисемпе пĕрле миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство тата хăçан çуралнине кăтартакан справка ямалла. Çав документсене хăйсене ямалла, копийĕсене мар, унсăрăн заявленисене пăхмаççĕ.

Паспортсене кашни хăй кăтартать. Заявленисене сентябрĕн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Техникумсемпе шкулсенче октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, заместительпе секретарĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

ПТ 00229 Типографи №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. д. Тираж 14.400 экз.